24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
5
ВЫРСАРНИКУН
4 (5719) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

КОММУНИСТСЕН АГРОТЕХНИКĂНА ВĔРЕНМЕЛЛЕ

Колхоз—пысăк хуçалăх. Çав пысăк, нумай енлĕ хуçалăха пĕлсе тата тĕрĕс ертсе пырас пулсан, социализмлă çĕрĕçне пĕлнисĕр пуçне тата унăн науки-пе культурине пĕлмелле. Çак наукăпа культурăсенчен пĕри вăл—агротехника пулать. Агротехникăллă мероприятисене вăхăтра, пĕлсе пурнăçа кĕртсе пыни социализмла, йăрансăр уйхирсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илме май парать. Агротехника хăйне майлă искусство, ăна вĕренсе алла илмесĕр колхоз производствине ертсе пыма тата май çук. Агротехникăна куллен вĕренсе тата ăна йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пыракан колхозсенче пысăк тухăçлă тĕштырă, пахча-çимĕçсем туса илеççĕ. Республикăшăн паллă колхоз председателĕсем, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз председателĕ С. Коротков, Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз председателĕ Рыбаков юлташсем 1940 çулта халиччен пулман вăйлă тухăçлă тырпул пуçтарса илчĕç. Çакăн пек пысăк тухăçлă тырпула мĕнпур колхозниксем, чи малтан колхоз председателĕсем, бригадирсем тата звеньевойсем социализмлă çĕрĕçĕн агротехникине вĕренсе, пурнăçа кĕртсе пынипе туса илнĕ. Агротехникăллă мероприятисене хакламан тата ăна çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пынă колхозсем иртнĕ çулта начар тухăçлă тырпул туса илчĕç.

Республикăри колхозсем иртнĕ çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланмасăр кăçал тата пысăкрах тухăçлă тырпул, йышлă пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. Халĕ ĕнтĕ чылай колхозсенче стахановла шкулсем тата агротехника кружокĕсем хĕрсе ĕçлеççĕ. Вĕсенче вуншар пин колхозниксемпе колхозницăсем сталинла вăйлă тырпул туса илмелли наукăна—агротехникăна вĕренеççĕ. Вĕсем çак шкулсемпе кружоксенче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен тата Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсен паха опычĕсемпе паллашса, хăйсен агротехникăллă пĕлӳлĕхне ӳстерсе пыраççĕ.

Çак шкулсемпе кружоксенче пирĕн кадрсем—партире тата партире тăман большевиксем колхозсене ертсе пырас тĕлĕшпе хăйсен пĕлӳне пуянлатаççĕ. Мĕншĕн тесен колхоза ертсе пырас пулсан, организациллĕ ыйтусене пĕлни кăна сахал, агротехникăллă ыйтусене те тĕплĕн пĕлес пулать. Коммуниста ертсе пыракан вырăна лартнă пулсан, унăн хăйне шанса панă ĕçĕн мĕнпур техникине тĕплĕн пĕлмелле. Çакăн пек чӳхне кăна колхоза, бригадăна тата звенона тивĕслипе ертсе пыма пулать.

Агротехникăна вĕренсе хăйĕн пĕлӳне ӳстерме тăрăшакан колхоз руководителĕсем пирĕн сахал мар. Ун пек колхоз председателĕсем, çавăн пекех бригадирсем колхозниксен масси умĕнче агротехникăна пĕлмен пирки намăс курмаççĕ. Акă, Ишлей районĕнчи çамрăк коммунист Г. Елахов юлташ ертсе пыракан «Большевик» колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 17 центнер тĕштырă туса илнĕ, кашни ĕçкунĕ тăрăх 4,5 килограмм тĕштырă тата 1 т. 50 пус укçан валеçеççĕ. Елахов юлташ агротехникăна тăрăшса вĕренет. Агротехника кружокĕнче Кольцовкăри колхоз председателĕ Коротков юлташ ялхуçалăх институчĕн Ученăй Советĕнче туса панă доклада сӳтсе-явнă. Елахов юлташ агротехникăна вĕренессине çуракине хатĕрленессипе çыхăнтарса пырать.

«Клевер» колхозри стахановла шкула тата агротехника кружокне колхоз председателĕ коммунист Г. Кочергов юлташ хăй ертсе пырать. «Броневик» колхозри стахановла шкулта ялсовет председателĕ Бычков, «Броневик» колхоз председателĕ И. Васильев, «Красный пахарь» колхоз председателĕ Г. Мушлаев коммунистсем, хăйсем агротехникăна вĕренсе алла илнĕ хыççăн, çак ыйту тăрăх лекцисем вуласа параççĕ.

Елчĕк районĕнчи Тăрăмри пуçламăш парторганизаци пуçарнипе организацинчи коммунистсем агротехникăна çине тăрса вĕренеççĕ. Парторганизацин пухăвĕнче коммунистсем агротехникăна мĕнле вĕренни çинчен ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явнă. Халĕ коммунистсем пурте агрокружоксемпе стахановла шкулсенче вĕренеççĕ. Вĕсем вĕренӳре ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ.

Ялти коммунистсем кăна мар, пархăн районри активĕн те агротехника ыйтăвĕсене тĕплĕн пĕлмелле. Агротехника ыйтăвĕсене пĕлмесĕр районри колхозсене пĕлсе ертсе пыма çук. Çакна уйрăм районсенчи партипе совет активĕ ăнланса илнĕ. Вăрмар районĕнчи парти, совет активĕ валли агротехника ыйтăвĕсем тăрăх час-часах лекцисем пулса иртеççĕ. Çак лекцисене актив хаваслăн çӳрет.

Анчах, агротехникăна вĕренессине хакламан парторганизацисем тата коммунистсем те сахал мар-ха. Вĕсем ялхуçалăхне, колхоз хуçалăхне агротехникăна пĕлмесĕр, чухăмăн ертсе пыма путласçĕ. Сăмахран, Çĕрпӳри машинно-тракторнăй станцинчи пуçламăш парторганизаци коммунистсене агротехникăна вĕрентес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Машинно-тракторнăй станцини коммунистсен агротехникăна та, ялхуçалăх машинисен: тракторсен, комбайнсен тата ытти машинăсен техникине те лайăх пĕлсе тăмалла. Анчах та вĕсем çакна тумаççĕ.

Коммунистсен колхозсем вăйлă тырпулпăн пуçарса янă кĕрешĕве организацилесе, ертсе пымалла. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, чи малтан коммунистсен хăйсен агротехникăна вĕренмелле тата пĕтĕм колхозниксене çак ĕçе хутшăнтармалла. Халĕ агротехникăна вĕренессине практикăллă ĕçсемпе, сăмахран, уйра юр тытас, вăрлăхсене сортласа тасатас, сортсăр вăрлăхсене сортлисемпе улăштарас, вырăнти удобренисене хатĕрлес тата минеральнăй удобренисем кӳрсе килес, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса пымалла.

Тӳрех калас пулать, уйрăм колхозсенче агротехникăна вĕренессине практикăллă ĕçсемпе çыхăнтармаççĕ. Вăрмар районĕнчи «Социализм» колхозра агротехника кружокĕ тунă. Унăн занятийĕсем те пулса иртеççĕ. Анчах, колхозра çуракине хатĕрленесси питĕ япăх пырать. Вăрлăхсене тасатмаççĕ, удобренисем хатĕрлемеççĕ, ялхуçалăх машинисене юсамаççĕ. Кунти коммунистсем агротехникăна вĕренни çуракине хатĕрленме пулăшакан майсенчен пĕри пулнине манса хăварнă. Пуринчен те ытларах агротехника кружокĕн занятийĕсене хăйсем йĕркеллĕн çӳремеççĕ.

Республика иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Çакă вăл колхоз руководителĕсем агротехника комплексĕсене тĕплĕн вĕренсе, пурнăçа кĕртсе пынипе килнĕ. Пирĕн умра тăракан задача вăл Сталин юлташ сулсеренех 8 миллиард пат тĕштырă туса илес тесе партнă задачăна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртесси пулать. Çавна май, халĕ колхоз руководителĕсем, коммунистсен агротехникăна тарăнăн вĕренмелле, кăçалхи çуракине нихăçанхи пек мар, пур енчен те кăтартуллăн хатĕрленмелле. Çавăнпа халĕ кашни колхозра стахановла шкулсем тата агротехника кружокĕсем пулмалла. Агротехникăна, ялхуçалăхĕнчи стахановецсен паха опычĕсене вĕренес ĕçе коммунистсен хăйсен ертсе пымалла тата вĕренӳре пример кăтартмалла.

Пирĕн колхозсем тухăçлă тырпул туса илесси колхоз руководителĕсенчен, правлени председателĕсем, бригадирсем, звеньевойсем агротехникăна вĕренсе ăна пурнăçа кĕртсе пынинчен килет. Çакă вăл колхоз руководителĕсен, партире тăракан тата партире тăман большевиксен агротехникăпа хĕçпăшалланма кирлине кăтартса парать.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту

СТАЛИНАБАД, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Таджикистанри колхозниксем çĕнĕ çулта Гиссарски Пысăк канал строительствинче калама çук пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Енер Гиссарский районри икĕ пин колхозник 6 пин кубла метр грунт кăларнă, вĕсем пĕр кунхи заданине 127 процент тултарнă. Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи стахановецăн Мухамедиевăн звени пуринчен малта пырать, унăн звени партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва чи малтан хутшăннă.

* * *

ВЛАДИВОСТОК, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Приморьери — Ново-Качалински, Нестеровски, Лучковски, Сучански машинно-тракторнăй станцисем тракторсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра юсамалли плансене тултарнă. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, МТС-сен коллективĕсем çуракине кăтартуллăн хатĕрленес тĕлĕшпе хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ.

* * *

ДАУГАВПИЛС (Латви ССР), январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Даугавпилсри предприятисенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Даугавпилсри чугунçуд мастерскойĕсенче ĕçлекен тимĕрçĕ Смагар — СССР Верховный Советне депутата суйлама кандидата тăратнăскер — хăйĕн помощникĕпе Бобровпа сменăра паровоз валли икĕ шатун тунă, çапла вара нормăна 1000 процент тултарнă.

ТАСС опроверженийĕ

Ютçĕршывсенчи хаçатсенче çапăн-пек пĕлтерӳ сараççĕ: январĕн 1-мĕшĕнче «Правда» хаçатра е Совет Союзĕнчи мĕнле те пулин урăх хаçатра Сталин юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен анализ туса çырнă ящала—те статья, те çĕнĕ çул ячĕпе чĕнсе калани—пичетленсе тухнă пулать.

ТАСС çапла пĕлтерме полномочи илнĕ: çавăн пек пĕлтерни вăл тĕрĕс мар, пуçран шухăшласа кăларнă ящала.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

В. М. Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ арт. завода наградăласси çинчен

В. М. Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ арт. завод 75 çул тултарнă юбилея паллă тăвас шутпа тата вооруженин çĕнĕ образецĕсене туса кăларма вĕренес ĕçре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн В. М. Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ арт. завода **Ленин орденĕпе** наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти январĕн 3-мĕш.

В. М. Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ арт. завод работникĕсене наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти январĕн 3-мĕшĕнче кăларнă Указпа — В. М. Молотов ячĕпе тăракан 172-мĕш номерлĕ арт. завод 75 çул тултарнă юбилея паллă тăвас шутпа тата вооруженин çĕнĕ образецĕсене туса кăларма вĕренес ĕçре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн заводри 80 работнике Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Ленин орденĕпе çаксене наградăланă: А. К. Бессарабенко — сборка начальникĕ, малтан «За трудовую доблесть» медальпе наградăланăскер, М. И. Галанин — токарь, С. П. Гуренко — главнăй конструктор, малтан «За трудовую доблесть» медальпе наградăланăскер, А. П. Гилев—тимĕрçĕ, В. И. Ушаков — производство мастерĕ.

Еçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 7 çынна наградăланă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 8 çынна, «Знак Почета» орденĕпе — 15 çынна, «За трудовую доблесть» медальпе — 17 çынна, «За трудовое отличие» медальпе — 28 çынна. (ТАСС).

Чăваш АСС Республикинчи ялсенче пурăнмалли çурт-йĕрсен тата культурăпа йăла строительстви валли 1941 çулта укçа-тенкĕ пухасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Центральный Исполнительный Комитечĕпе Совнаркомĕ 1934 çулти январĕн 23-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1934 г. № 5, стр. 38), 1935 çулти январĕн 14-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1935 г. № 4, стр. 31). 1936 çулти январĕн 5-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1936 г. № 2, стр. 18), 1936 çулти февралĕн 17-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1936 г. № 11, стр. 83), 1936 çулти апрелĕн 7-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1936 г. № 18, стр. 153), 1937 çулти мартăн 14-мĕшĕнче (С. З. СССР, 1937 г. № 19, стр. 72) «Ялсенче пурăнмалли çурт-йĕрсен тата культурăпа йăла строительстви валли укçа-тенкĕ пухасси çинчен» йышăннă постановленисем тăрăх тата РСФСР Совнаркомĕ 1936 çулти январĕн 13-мĕшĕнче, 1938 çулти январĕн 28-мĕшĕнче «Ялсенче пурăнакан халăхран çурт-йĕрсен тата культурăпа йăла строительстви валли укçа-тенкĕ пухассине ирттересси çинчен» йышăннă 12-мĕш тата 14-мĕш №-лĕ постановленисем тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕ **çапла йышăнать:**

1. Чăваш АССР районĕсем тăрăх колхозниксен хуçалăхĕсенчен культсбор укçине вăтам шутпа çакăн чухлĕ пухмалла тăвас:

РАЙОНСЕМ	Кашни хуçалăхран культсбор укçи мĕн чухлĕ пухмалли (процентпа)	
	Пĕрлештермен пурăнăçсемпе выльăх-чĕрлĕхсенчен илекен доход сен источникĕсем çук хуçалăхсем.	Пĕрлештермен пурăнăçсене выльăх-чĕрлĕхсенчен илекен доход сен источникĕсем пур хуçалăхсем
Улатăр	7	30
Элĕк	7	24
Вăрнар	7	27
Йĕпреç	7	30
Ишлей	7	27
Калининский	7	27
Канаш	7	27
Куславкка	7	27
Комсомольский	7	27
Красноармейский	7	24
Хĕрлĕ Чутай	7	30
Кувакино	7	27
Сĕнтĕрвăрри	7	30
Октябрьский	7	27
Первомайский	7	27
Пăрачкав	7	30
Советский	7	27
Сĕнтĕр	7	27
Вăрмар	7	24
Çĕрпӳ	7	24
Шупашкар	7	27
Чкаловский	7	24
Шăмăршă	7	27
Шăхасан	7	24
Çĕмĕрле	7	30
Етĕрне	7	30
Елчĕк	7	27
Тăвай	7	27

2. Еçсыннн депутачĕсен райсовет исполкомĕсене, çак постановленири 1 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, çулсерен 1 процентпа ӳстерсе, 1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче 5 процент тата 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче 10 процент туса илмелле.

3. Çак постановленипе çыхăннă ĕçсене пурнăçлама ССР Госбанкĕн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ссудăсене ӳстерсе, 1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, çулсерен 1 процентпа ӳстерсе, 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче 5 процент тата 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче 10 процент туса илмелле.

4. Еçсыннн депутачĕсен райсовет исполкомĕсене, çак постановленин 3-мĕш статьинче, ЦИК тата СНК ССР 1935 çулти январĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленин 4-мĕш статьинче палăртса панă ставкăран тухмасăр, уйрăм ялсене валли единоличник хуçалăхĕсенчен культсбор укçи мĕнчухлĕ пухмаллине татăклăн туса палăртма хушас.

5. Культьсбора тӳлесе татмалли срока çапла тăвас: 1941 çулти февралĕн 15-мĕш тĕлне — 50 процент тата 1941 çулти мартăн 15-мĕш тĕлне — 50 процент.

6. Еçсыннн депутачĕсен райсовет исполкомĕсен хуçалăхсене пурне те тата тĕрĕс шута илмелле, культсбор мĕн чухлĕ тӳлемеллине тĕрĕс палăртмалла тата законпа палăртса панă пур льготăсене те тĕрĕс памалла.

Ватăлса ĕçлеймн пулнă çынсен хуçалăхĕсене культсбор тӳлеттересси-нчен хăтарассине ялсовет исполкомĕсем тăратнă списоксем тăрăх ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем йышăннă постановленисемпе туса пымалла.

Чăваш АССР Центральный Исполнительный Комитечĕпе Совнаркомĕ 1938 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче тата Чăваш АССР Совнаркомĕ 1939 çулти декабрĕн 13-мĕшĕнче «Чăваш АСС Республикинчи ялсенче пурăнмалли çурт-йĕрсен тата культурăпа йăла строительстви валли укçа-тенкĕ пухассине ирттересси çинчен» йышăннă постановленисене хăйсен вăйне çухатнă тесе шутлас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. СОМОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Г. ИВАНОВ.

Шупашкар хули,
1940 çулти декабрĕн 31-мĕш.

Провидени бухтинчи парник хуçалăхĕ

ХАБАРОВСК. Провидени бухтинче агроном Лопуха юлташ ертсе пынине пысăк парник хуçалăхĕ организациленĕ. Иртнĕ çул çак хуçалăхра 10.500 килограмм пахча-çимĕç туса илнĕ. Геплицăри кашни тăватăкăл метр çĕр яраççĕ. Çакăнта тăвакан пахча-çимĕçсене самолетсем çине тиесе Шмидт мысĕ, Врангель утравĕ çине, Уэллена тата Чукоткăри ытти поляр станцисене.

Советлă Молдавия суйлавсем умĕн

КИШИНЕВ, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Бессарабири, Днестр шывĕн сулахай енчи хуласенче, местечкăсемпе ялсенче ССР Верховный Совечĕн тата Молдаван Верховный Совечĕн суйлавĕсене хатĕрленес ĕçе туса çитереççĕ. Суйлавсем пулмалли çуртсене йĕркене кĕртнĕ, урнăсем, суйлав бюллетенĕсем хатĕрлесе çитернĕ.

Пĕтĕм республикипех кандидатсемпе суйлавçăсем тĕл пуласси пулса иртет. Кишинев уездĕнчи Малкоч ялĕнче пулнă пухура СССР Верховный Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Ф. Пую юлташ тухса каланă. Пухура 700 суйлавçă пулнă. Ф. Пую юлташăн пурнăçне ялти çынсем аван пĕлеççĕ. Çичĕ çула çитсен вăл кĕтӳ кĕтнĕ, ун хыççăн помещиксемпе кулаксем патĕнче батрак пулса ĕçленĕ. Совет власĕ туса хунă хыççăн малтанхи кунсенчех Пую юлташа ялсовет председателĕ тунă. Хресчен Савелиу юлташ пухура çапла каланă:

— Эпир молдаван халăхĕн шанчăклă вăлăмĕпе Пую юлташăн савăнăçлăн сасăлатпăр!

Старшенский районри Кирианы ялĕнче Молдаван ССР Верховный Советне депутата суйланма хресчен Ольга Житарь баллотировкăна тăрать. Ялти суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче хресчен хĕрарăмĕ Юраш юлташ çапла каланă:

— Эпир, хĕрарăмсем, суйлавсене ч малтанхи хут хутшăнса чăн-чăн халă кандидачĕшĕн сасăлатпăр. Ольга Ж тарь Бессарабири хресченсен нушисе ле лайăх пĕлет, вăл республика Верховный Советĕнче пирĕн чăн-чăн представитель пулĕ. Вăл пирĕн пĕтĕм халăх кандидачĕ—коммунистсемпе бесспартийнăйсен кандидачĕ.

Ганчешты ялĕнче — 500 суйлавçă умĕнче СССР Верховный Советне депутата суйлама тăратнă кандидат — Кишинев хулинчи рабочи Георгий Иванович Руссу сăмах каланă. Рус юлташ чи лайăх ударниксенчен п пулнă, вăл Мускава, Октябрьти Со ализмлă аслă революци XXIII çул т тарнине уявлама килнĕ делега участникĕ.

— Мускавран,—каласа парать Ру юлташ,—эпĕ темиçе хут вăй-хал п нипе тавăрăнтăм. Унта эпĕ рабочи мĕнле пысăк хастарлăхпа ĕçлени кашниех халăх ырлăхне çĕклессин ĕнле тăрăшса ĕçленине куртăм. мăн суйлавçăсене çапла каласа ш таратăп: хамăн мĕнпур вăйсене юр нă тăван çĕршывшăн, ĕçсыннисен лăхĕшĕн парăп!

Халăх кандидачĕсем

РИГА, январĕн 3-мĕш .(ТАСС). Хуласемпе ялсенче суйлав умĕнхи пухусем иртеççĕ. Лепая хулине суйлавçăсемпе тăл пулса калаçма Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат — Латвири Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕн секретарĕ Ж. Спуре юлташ пынă. Суднăсем тăвакан «Тосмаре» заводри рабочисен пухăвне пин çын ытла пынă. Вĕсем хăйсен кандидатне хĕрӳллĕн саламланă. Рабочи Шмедыньш юлташ июньри историллĕ кунсем çинчен — Латвири ĕçсыннисем ирĕке тухнă, капитализм пусмăрне сирсе пăрахнă вăхăт çинчен хумханулла сăмах калать.

— Январĕн 12-мĕшĕнче, — тенĕ Шмедыньш юлташ, — эпир пурте, пĕтĕм Латви халăхĕ, суйлав ещĕкĕсем патне кайăпăр, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлапăр.

Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа А. Луринь юлташпа тĕл пулса калаçма Даугавпилс хулинчи 9-мĕшпе 10-мĕш суйлав участокĕсенчи суйлавçăсем 900 çын ытла пухăннă. Пухура тухса калакансем ун çинчен çапла каланă: вăл — халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйне парса кĕрешекен çын. Буржуаллă клика пуçпулса тăнă вăхăтра революциллĕ ĕç туса пынăшăн Луринь юлташа каторгăра ĕçлеттермелле тунă. Халĕ ирĕклĕ Советлă Латвире вăл Даугавпилс уезчĕн исполкомне ертсе пырать.

Пухура слесарь Козловский юлт хĕрӳллĕ сăмах тухса каланă:

— Буржуаллă Латвире халăх с лавсемпе интересленмен, — тенĕ вă Рабочисемпе хресченсем çакна ла пĕлнĕ: буржуаллă сейм депутачĕ «тума пулнисем» вĕсем — пушă сăм улталăвлă демагоги кăна пулнă. СС Верховный Совет суйлавĕсен кунĕ рĕн пĕтĕм халăхăн праçникĕ пу Эпир коммунистсемпе беспартийнăй блокĕн кандидачĕсене лайăх пĕлетт эпир вĕсене хамăр хушăран тăрат вĕсеммĕн пĕр шухăшлă пулса сасă пăр! Халăх тăшманĕсем, сирпĕтсе рахнă плутократлăлĕ режимăн тар сем коммунистсемпе беспартийнăй блокĕн çĕнтерĕвне чăрмантарма хăт наççĕ. Ăна вĕсем тăваймĕç! Латви лăхĕ тăшмансен ирсĕр ĕçĕсене тим сăнаса тăрать, вăл тăшмансене т шыв çине кăларма пĕлет. Эпир ша тăратпăр, хамăр суйланă депутат халăхăн шанчăклă тарçисем пулĕç, рĕн Советлă çамрăк Латви Респуб кинчи социализм строительствин ç çĕнтерĕвĕсемшĕн чăтăмлăн кĕрешек сем пулĕç.

Козловский юлташ сăмахне пу пĕр кăмăллă пулса ырланă. Суйла сем çапла каланă: суйлавсен кунĕ че хамăран сасăсене коммунисто пе беспартийнăйсен блокĕн кандид семшĕн — Латви халăхĕн чи ла представителĕсемшĕн парăпăр.

Хисеплĕ грамотăсем панă

Январĕн 4-мĕшĕнче, Шупашкарта, Чăваш АССР Совнаркомĕн заседанийĕм пулакан залĕнче халăха çутта кăларас, сывлăха сыхлас, искусство тата литература ĕçĕсене малалла аталантарса пырас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн наградăланă çынсене РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Хисеплĕ грамотăсем панă.

Хисеплĕ грамотăсене çак юлташсем илчĕç: РСФСР тата Чăваш АССР искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ художник М. С. Спиридонов, РСФСР шкулăн тава тивĕçлĕ учителĕ, Шупашкар хулинчи çутĕç пайĕн шкул инспекторĕ А. В. Черпакова, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕсем: Çĕмĕрле больницинчи врач Архангельская, Шупашкар больницинчи главнăй врач Кузнецов, Шупашкарти туберкулез диспансерĕн главнăй врачĕ Ефимов, Шупашкар больницинчи хирургический отделени заведующийĕ Наумов, Шупашкарти трахом институчĕн директорĕ Забугин, Чăваш АССР ха поэчĕсем: орденоносец Николай нович Полоруссов-Шелеби тата С Эльгер, Чăваш АССР искусствăн тивĕçлĕ деятелĕсем: Айзман, робьев тата Иваннин, Чăваш А тава тивĕçлĕ артисчĕ Молодов ташсем.

Çавăн пекех Чăваш АССР шку гава тивĕçлĕ учителĕсен званин нлисене, 14 çынна Чăваш А Верховный Совет Президиумĕн сеплĕ грамотисене панă. Вĕсен гĕнче А. В. Карасев, О. В. Румян Г. С. Самсонов, учительсен квал кацине хăпартас тĕлĕшпе ĕçлекен ституцăн вĕренӳ пайĕн заведующ Трофимов, А. Н. Пчелина т. юлташсем те.

З. А. Андреева юлташ награда нисене ăшшăн саламларăмĕ тата ма нехи ĕçре çитĕнӳсем тума сунчĕ.

Наградăланисем Хисеплĕ грамот не алла илнĕ хыççăн искусство, тература, культура енĕпе малалл пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн п вăя хурса ĕçлеме сăмах панă.

Продукци кăларасси икĕ хут ытла ӳсе

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Кондитерски фабрика иртнĕ çулта тĕрлĕрен премĕксемпе конфетсем тата печенисем 132,8 тонна туса кăларнă. Урăхла каласан вăл çулталăк планне 147 процент тултарнă.

Фабрикăн продукци туса кăларасси кăçалхи çулта икĕ хут ытла ӳсет. Малтанлăха палăртнă план тăрăх, кăçал вăл премĕксем 2300 центнер, фетсем 600 центнер т. ыт. тава пĕтĕмпе 3100 центнер туса кăлар ла.

Кăçалхи çул фабрикăра торт кукăльсем тăвакан цех ĕçлеме нат. Вăл цех çулталăк хушшинч центнертан кая мар продукци ту лармалла.

Хурт-хăмăрсене лайăх пăхса ӳсрамалла

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хурт-хăмăр ĕрчетни колхоз хуçалăхне вăйлатас çĕрте сахал мар усă парать.

Колхозсенче хурт-хăмăра ĕрчетесси пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пырать. Районра 52 колхозра хурт-хăмăр ĕрчетеççĕ. Вĕсенче пурĕ 1003 вĕлле шутланать.

Наратчаккинчи «Красное Сормово» колхоз хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе районра пĕрремĕш вырăнта тăрать. Хурт-хăмăр утарне колхоз организациленнĕ çулах тунă. Колхоз хăйĕн утарĕнче районри ытти колхозсене те сутса хурт-хăмăр нумай тулнтарчĕ, çав вăхăтрах колхоз хăйĕн валли те нумай тупăш илсе усă курать.

Колхозниксене çулсеренех ĕçкунĕ пуçне пыл валеççе панă. Колхоз хăйĕн вăйпе 3 инструктор-пчеловод курсран вĕрентсе кăларчĕ. Çак вăхăтрах колхозри ытти çамрăксем утарта ĕçлесе вĕсенчен вĕренсе раççĕ.

Колхозăн хурт-хăмăр утарĕсем манта 3 çĕрте вырнаçнă. Пурĕ вĕ 235 вĕлле шутланса тăрать, к пыл хурчĕсене хĕлле усрама хатĕрленнĕ. Хуртсене тирпейлесе шаниксене вырнаçтарса кĕртсе нă. Хуртсем валли апат çителĕклĕ варнă.

Çак вăхăтрах районра хăшпĕр хозсен председателĕсем тата утар ведующийĕсем ку ĕçе тивĕçлипе ламаççĕ.

Акă, Октябрьскинчи «Ударник» хозăн иртнĕ çулта 11 вĕлле пулсан, кăçалхи çул пĕр вĕлл çук. Çак ĕç колхоз председателĕ рăшманнинчен килнĕ.

А. Жук.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ялти коммунистсен колхозри авангардлă рольне хăпартар

Партин XVIII съезчĕн решенийĕсене тулăх — коммунист Викторов, вăл ВКП(б) кандидачĕсен группин руководителĕ) ялхуçалăх ĕçĕсене пур енĕпе те ăнăçлăн вĕçленĕ. Колхоз ĕççунĕ пуçне 3,3 килограмм тырă валеçет. Киров, Куйбышев ячĕпе тăракан, «Хĕрлĕ Çар», «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозсем халĕ вăйлă тырпул, пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илме хĕрÿллĕн хатĕрленеççĕ. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхоз ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ. Вăрлăхсене сортласа тасатнă, уя 705 лав тислĕк, 697 лав торф кăларнă, 50 гектар çинче юр тытнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз 214 гектар çинче юр тытнă. Вăрлăхсене сортланă. Ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ. Уя 787 лав тислĕк кăларнă.

ВКП(б) райкомĕ колхозсенчи коммунистсене колхоз хуçалăхне большевикла ертсе пыма вĕрентес тĕлĕшпе канашлусем туса ирттернĕ. ВКП(б) райкомĕнче колхозсенчи пусламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе кандидат групписен руководителĕсен отчечĕсене итленĕ Çаксем колхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатма пулăшаççĕ. Иртнĕ сулсенче Киров ячĕпе тăракан, «Хĕрлĕ Çар», «Хĕрлĕ çăлтăр», Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан, Шаккăлти «Искра» колхозсене пĕрмаях районран уполномоченнăйсем ярса панă. Хальхи вăхăтра çак колхозсенчи коммунистсем районран уполномоченнăйсем ямасăрах хăйсен ĕçĕсене вăхăтра туса пыраççĕ.

Коммунистсене колхоз хуçалăхне пур енĕпе те аталантарса пыма вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха. Районра чылай пусламĕш парторганизацисем тата уйрăм коммунистсем колхозсене ертсе пырас тĕлĕшпе хăйсем çинче тăракан ответлăха тулăмаçĕ. Вăтакас Татмăшри кандидатсен группин руководителĕ пулнă А. И Седов тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ вăхăтра ĕçкĕ-çикĕре çÿренĕ. Сикасси ялĕнчи кандидатсен группин руководителĕ Майоров ялсоветне ĕçлеме пымасăр прогул тунă. Çав вăхăтрах колхозсем кая юлса пынă. Чылай колхозсенче ĕç дисциплини начар пулнă.

1940 çул иртрĕ Колхозсенче тупăшене валеççе пĕтереççĕ. Çавна май колхозсенче çулталăк хушшинчи ĕçсем çинчен отчетсем тума тытăнаççĕ. Колхозниксен пухăвĕнче çулталăк хушшинче колхозри производствăлла плана мĕнле пурнăçа кĕртнине тишкĕрсе, 1941 çулти производство планне тăвас пулать Çакна тума ялти коммунистсен авангардлă рольне татах ăстерни кирлĕ.

Д. ВАСИЛЬЕВ.
ВКП(б) Канаш райкомĕн секретарĕ.

Коммунистсен сĕнĕвĕсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пымалла

Çыргăнсен отчетпа суйлав пухăвĕнче парса хăварнă практикăлла сĕнĕве пурнăçа кĕртсе пырасси—парторганизацисен кулленхи ĕçĕ пулса тăнă. Анчах, хăшпĕр предприятисен учрежденисенчи парторганизацисен коммунистсем парса хăварнине манса каяççĕ. Сĕнтĕр машинно-тракторнăй станцинчи парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем хаклă сĕнÿсем парса хăварнă. Унтанпа вунă уйăх иртрĕ. Çулăшăра, чăн та, парторганизацин çулăхланни палăрать, анчах çитеймĕ-ха.

Парторганизаци трактористсемпе комбайнерсем хушшинче массăллă-политика ĕçе çителĕксĕр туса пынă. Вăл çынсене интереслемен. Бригадăсен куллен ертсе пыни, вĕсене тăтăшах пулăшса пыни пулман. Ахальтен ĕнтĕ Сĕнтĕр машинно-тракторстанци тракторсемпе ĕçлемелли тулăлăк планне 85 процент çеç тунă.

Çавна тулăхлăхланни трактористсемпе комбайнерсем хушшинче ĕç дисциплини начар пулнинчен килнĕ. Верховный Совечĕн Указĕ тухсанпа машинно-тракторнăй станцинсен прогул тунă. Пусламĕш парторганизаци социализмлă ăмăртупа çынсене движенине çителĕксĕр ертнă. Ĕç дисциплининне пăсаканнисĕр хăяррăн кĕрешсе пыман. Çавăнтăн ĕнтĕ тракторсемпе ĕçлемелли тулăлăк планне тултарайманнин тĕп сăлтавĕсем пулса тăраççĕ.

Парторганизаци производство ыйтăвĕсене коммунистсен пухăвĕнче лартса сÿтсе-явни питĕ сахал пулнă. Çавăн пекех парторганизацине дирекци стахановецсен паха опычĕсене ытти бригадăсене куçарма тăрăшман. Машинно-тракторнăй станцинче лайăх ĕçлекенсем çук мар. Акă, Г. Маринкинпа П. Сорокин бригадисем хăйсен ĕçĕсене ытлашшипех тултарнă, горючи чылай перекетленĕ. Вишнев тракторист хăйĕн планне 203 процент тултарса, 1500 килограмм горючи, А. Кабуркина трактористка ĕç планне 157 процент тултарса, 500 килограмм горючи перекетленĕ.

Пусламĕш парторганизаци 1940 çулта вунă уйăх хушшинче тăватă пуху çеç ирттернĕ. Çак хушăра лайăх ĕçлекен трактористсемпе комбайнерсене пĕр çынна та партин ретне илмен. Партинче тăма юрăхлă çынсем çук мар.

МТС дирекципе парторганизаци умĕнче тăракан задача—тракторсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсасси. Анчах çак ĕç хальхи вăхăтра машинно-тракторнăй станцинче питех те япăх пулса пырать.

Парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем парса хăварнă сĕнÿсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пымалла.

Г. Соловьев.

Комсомол организацин ĕçĕ лайăхланмах пырать

ÇАЙ. Тĕмерти вăтам шкулти комсомол организацийĕ хăйĕн ĕçне лартсах пырать. Организацинче пуçлăхс

Пирĕн 1940 çулти ĕçсен итогĕсем

Хамăн килти пахчара пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илнине кура 1938 çулта мана çак ĕçе колхозра та ертсе пыма хушрĕç. Колхоз правленийĕ бригадир пулса ĕçлеме çирĕплетрĕ. Ку ĕçе пысăк хастарлăхпа тытăнтăм. Малтанхи çул купăста ăнса пулчĕ, 2,08 гектар çинчен пĕтĕмпе 595 центнер туса илтĕмĕр.

Иккĕмĕш çулта 10,24 гектар çине тĕрлĕ пахча-çимĕçсем лартрăмăр. Результатсем япăхах мар пулчĕç: 800 центнер купăста, 107 центнер хăяр, 145 центнер помидор тата ытти çимĕçсене те вунтвар центнерĕн пухса илтĕмĕр. Çак çулта пахча-çимĕçсем сутса колхоз 12.582 тенкĕ тупăш илчĕ.

1940 çул маншăн татах та паллă çул пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен, эпĕ нихăçан курман тухăçлă пахча-çимĕç туса илтĕм.

Хамăр çĕр çинче арбуз туса илме мăй пурри çинчен эпĕ шухăшламанччĕ те. Çук, кун çинчен ĕлĕкрех эпир тĕлĕкре те ĕмĕтленме пултарайман «Вăл кăнтăрта çеç пулать» тесе калатчĕç ваттисем. Каланине ĕненнĕ, ĕçе пуçăнса пăхман.

Иртнĕ çура вара эпĕ пикенсех арбуз тăвас ĕçе тытăнтăм. Ес çапла пулса пычĕ: кĕркунне тислĕк тăкса хăварнă вырăна çăва тухсанах сурелерĕмĕр. Каярахпа çав вырăнах икĕ хутчен суханаса çемçетрĕмĕр, сурелерĕмĕр. Çĕр пирченсен арбуз вăррине хума 35 сантиметр тарăнăш тăваткăл шăтăксем авăтса унта кăштах тислĕк, ун çине 25 сантиметр хулăнăш хăйăрпа çĕр хутшăнтарса хунă. Çав шăтăксене 3-шер вăрă пăрахса тухнă, çийĕнчех шăварнă. Нумăç часах типсе ан кайтăр тесе, арбуз вăррисем çине ала витĕр кăларнă çăмăл çĕр хутăмăр Виç-тăватă кун хушшинче пирĕн арбуз шăтса та тухрĕ. Çийĕнчех шăвартăмăр. Сăмах майĕн çакна каламалла: арбуз вăррине эпир хăяр вăрринчен виçĕ кун малтан ахрăмăр. Арбуз тунисем ӳссе пынă май яланах вĕсене эпир купаласа, çумсенчен татăрăмăр. Август уйăхĕн вĕçнелле вара пирĕн арбуз çимелле пулчĕ, пуçтарма пуçларăмăр.

Калас пулать, тăрăшса ĕçлени харама каймасть, паха результатсем парать. Çур гектар çĕр лаптăкĕ çинчен эпир 48 центнер арбуз туса илтĕмĕр.

Ытти çимĕçсем те япăхах пулмарĕç. 5 гектар çинчен 620 центнер хăяр, 4 гектар çинчен 568 центнер купăста, 2 гектартан 318 центнер помидор, гектартан 471 центнер кишĕр, 0,11 гектар çинчен 22,8 центнер сухан туса илтĕмĕр.

Ытти çулсенче эпир вăрлăхсем çитменнипе аптăранă. Иртнĕ çулта вара ку енĕпе те чылай ĕçсем тума лекрĕ. Хамăр алăпах 28 килограмм кишĕр вăрри, 1,5 килограмм купăста вăрри, 5 килограмм укроп т. ыт. вăрлăхсем те турăмăр.

Колхоз иртнĕ çура туса илнĕ çимĕçсенчен 33 пин тенкĕ ытларах тупăш илчĕ. Акă мĕнле пысăк тупăш парать пахча-çимĕç! Çавсене куратăн та малашне татах та хастарлăрах, татах та тимлĕрех ĕçлес килет. Кăçал тата эпир выставка участникĕ пулма кандидата тăма пултартăмăр. Мĕнле сăмса ĕçлес килмĕ-ха кун пек чухне! Эпĕ 48 çулта, анчах ĕмĕтсем манăн пысăк.

Пирĕн задача — 1941 çулта пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илесси. Ку тĕлĕшпе эпир чылай ĕçсем тума тивĕçлĕ. Кăçал ĕнтĕ арбуз ытларах лартма шутлатпăр (ăна пĕлтĕрхинчен маларах лартатпăр). Халĕ парниксем хатĕрленĕ, вĕсем çине витме улăмран çыхса матăсем тăватпăр, хăярсем иртерех тума пĕкĕсем аватпăр, кирлĕ инструментсене те çитес кунсенчех хатĕрлесе çитеретпĕр.

Пахча-çимĕç тунă çĕре тислĕк те чылай кирлĕ. Ку ĕçе халех тумалла. Паянхи куна эпир 100 лав ытла тислĕк тăкрăмăр, кайăк-кĕшĕк тислĕкне хатĕрлетпĕр. Бригада членĕсем (пĕтĕмпе 26 çын) пурте тăрăшса ĕçлеççĕ, эпĕ хушнисене вăхăтра пурнăçлаççĕ. Мĕншĕн тесен, тăрăшса ĕçлени нихăçан та харама кайманнине, вăл паха результатсем панине вĕсем пĕлеççĕ.

Пирĕн Çĕмĕрле районĕнче пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсем нумай. Эпир кăçал хамăр умма çакăн пек задача дартатпăр: малашне ăмăртăва сарса пырса малтисене хуса çитсе иртсе кайма, татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума пулатпăр.

Н. НЕМАКОВ.

Ленин ячĕпе тăрăкан колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ, Çĕмĕрле р.

Пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсемшĕн

Колхозсенче пахча-çимĕçсем лартса тăвас ĕçе сарса пырасси пысăк ĕç пулса тăрать. Пирĕн хуласемпе промышленноçлă центрсене çителĕклĕ таран пахча-çимĕçсем парса тăмалла, çавăн пекех колхозра та пахча-çимĕçсем йышлăн пулмалла. Пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесен пысăк тупăш илме пулать. Малта пыракан колхозсен опычĕсем çакна кăтартса параççĕ: кăнтăрта çитĕнекен культурăсем пирĕн республикăра та ăнăçлăн пулса çитеççĕ.

Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия» колхоз тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе чылайранпа ĕçлет. Эпĕ те колхозра тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем лартса тăвас, кăнтăрти культурăсене хамăр республикăра çитĕнмелле тăвас ĕçе питех килĕштеретĕп.

1939 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ мана пысăк кĕмĕл медальпе наградăларĕ. Çак награда пахча-çимĕç бригадин членĕсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарчĕ. 1939 çулта пирĕн колхоз пахча-çимĕççенчен 42 пин тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, 1940 çулта 95 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Вунă çул каярах колхозра хăяр кăна лартса тунă пулсан, халхи вăхăтра мĕнпурĕ 28 сорт пахча-çимĕçсем лартса тăваççĕ. Пахча-çимĕçсен тухăçĕ çулран-çул ӳссе пырать.

1941 çул валли план турăмăр. Çак план тăрăх кăçал пирĕн пурĕ 2000 центнер пахча-çимĕçсем туса илмелле. Çакăн чухлĕ туса илме условисем çитĕклĕ. Удобренисем те нумай пирĕн. Парник хуçалăхне йĕркелесе çитеретпĕр ĕнтĕ. Пахча-çимĕçсен вăррисене те хамăр колхозрах хатĕрленĕ.

Пирĕн сад-пахчи те пур. Кăçал садпахчине аслăлататпăр, çимĕçсем паракан йывăçсем тата 2 пин тĕп лартатпăр.

Халĕ эпир агротехникăна вĕренетпĕр. Февраль уйăхĕнче практикăллĕ ĕçе пуçăнатпăр, сухан лартса тума тытăнатпăр. Çапла пирĕн колхозра хĕл вăхăтĕнчех симĕс сухан пулать.

Пахча-çимĕç бригадисенче тăватă звено. Кашни звено кăçал пысăк тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илме хатĕрленет. Эпир кăçал та пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе малти вырăна тухассишĕн кĕрешетпĕр.

Овощевод **Т. ВАСИЛЬЕВ.**

Звено членĕсем: **А. Осипова, А. Егорова, А. Артемьева, Гордеева, Фомина, Гаврилова, П. Кузьмина.**

Вăрман хатĕрлевĕшĕн тăрăшмаççĕ

ЭЛЕК. 1940—41 çулсенче вăрман хатĕрлевĕнче куллен 300 çын çуран, 250 лаша ĕçлемелле. Çак енĕпе районри ялсоветсенчен 10 ялсовета Çĕмĕрле районĕнчи механизациленĕ вăрман пункчĕ çумне çирĕплетнĕ. Вăрманта халĕ 250 çын çуран, 58 лаша ĕçлеççĕ.

Мăн Выла ялсоветĕнчи колхозсем вăрманта ĕçлеме 45 çын çуран, 30 лаша уйăрса пама мехлеспунктпа договор тунă. Апла пулин те ку колхозран вăрманта лашапа ĕçлекенсем 4 çынтан ытла мар. Елекейкино ялсоветĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлев енĕпе районра малта пыракан колхоз шутланать. Унăн 432 фестметр вăрман турттармалла, халĕ 234 фестметр турттарса хатĕрленĕ. Çавнашкалах «Триер» колхоз 300 фестметр вăрман турттарса кăларнă, хăйне тунă договор тăрăх унăн 455 фестметр турттармалла.

Вăрман хатĕрлевĕ мĕншĕн начар пырать? Çак ыйтăва хирĕç ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕн исполком председателĕн заместителĕ, районри план комисси председателĕ Иванов юлташ панă ответран вăл çапла курăнать: колхозсем вăрман хатĕрлеме Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕпе договорсем тунă. Çак договорсене вăрманта ĕçлеме килĕшекен колхозниксем патне çитермесĕр тăнă, вĕсемпе уйăрăм договорсем туман. Колхозниксене договорпа вăрманта ĕçленĕшĕн паракан льготăсем çинчен ăнлантарса паракансем пулманпа пĕрех. Çакăн пирки те колхозниксенчен вăрман хатĕрлевĕнче хутшăнса ĕçлекенсем ытла та сахал.

Ялсовечĕсем вăрман хатĕрлевне начар организацилесе пыраççĕ. Ефремкасси тата Тени ялсовечĕсем вăрман хатĕрлев планне хальтерех кăна колхозсене çитернĕ. Ку плансене вĕсем райсовет исполкомĕнчен иртнĕ çулхи август уйăхĕнчех илнĕ пулсан та халичченех сĕтел çинчи клеенка айĕнче тытса усранă. Ку ялсоветсенчен халĕ вăрманта пĕр çын та ĕçлемест.

Ефремкасси ялсовет председателĕ Орлов юлташ вăрман хатĕрлевĕ начар пынине çакăнпа кăтартса пама тăрăшать: «Ялсовета кĕрекен колхозсем час аван çапса пĕтереймерĕç. Аван çапса пĕтернĕ хыççăн урăх ĕçсем килсе тухрĕç: вăрлăхсене сортлама тытăнмалла пулчĕ т. ыт. те. Çакна пула вăрман хатĕрлеме каймалла пулмарĕ».

Çăлтавсем пачах унта мар, вĕсем вăрман хатĕрлевне организацилесе пыманнинче пулаççĕ. Вăрман хатĕрлевĕпе ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕ те, ВКП(б) райкомĕ те сахал интересленеççĕ.

Халĕ вăрман хатĕрлевĕн хĕрӳ вăхăчĕ пулмалла. Апла пулсан вăрман хатĕрлев ĕçне вăраха ямасăр халĕ туса пымалла.

«Чăваш Коммуни» корр.

Вăйлă тырпул туса илнĕ районсем

Чăваш АССР Госпланĕ пĕлтернĕ тăрăх, тĕштырăсен тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе правительство панă заданине республикăра 10 район пурнăçланă.

Улатăр районĕ, задани тăрăх 1940 çулта тĕштырăсене кашни гектар пуçне 12,8 центнер пухса кĕрес вырăнне, 13,8 центнер, Йĕпреç районĕ 12,3 центнер вырăнне 13 центнер, Етĕрне районĕ 13,2 центнер вырăнне 13,3 центнер пухса кĕртнĕ.

1940 çулта Калининский тата Сĕнтĕр районĕсенчи колхозсем чи вăйлă тырпул туса илнĕ. Калининский район кашни гектар пуçне 14,9 центнер, Сĕнтĕр районĕ 14,1 центнер тĕштырă туса илнĕ.



УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: сĕнĕрен туса пĕтернĕ пурăнмалли çурт (Шупашкар). Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ

ДЕПУТАТ ПОЧТИ

Депутат Петр Иванович Пумпур хăйĕн суйлавçисем патĕнче час-часах пулать, вĕсен пурнăçĕпе, ĕçĕсемпе кураннать. Вăл Вăрнара хăйĕн самолетĕпе те вĕçсе килнĕ.

Петр Иванович Пумпур Вăрнарта, Калининора, Элĕкре, Шупашкарта, Çĕрпӳре, нумай ялсенче, колхозсенче пулнă. Ăна пĕлмен çын та çук пулĕ пирĕн республикăра.

Çавăн пекех вăл кашни кунах республикăри пур кĕтессенчен те сыруем илсе тăрать. Кашни çырăва тĕпĕн вулать, сийĕнчех ăна тĕрĕслеме парать, суйлавçăсене сыру çырса ответ парать. Вăл хăй те Союзри наркоматене кайса çӳрет, ĕççыннисене часрах пулăшу пама тăрăшать.

Калинино районĕнчи «Красноармеец» колхозри колхозниксем иртнĕ çултах çĕнĕ клуб тума пуçланă. Чăвах та колхоз çулсерен пуянланса пырать, тырăсем вăйлă пулаççĕ, анчах çитта лайăх клуб пулман. Колхозниксем тăрăшса йывăç турттарнă, клуб тума пуçланă. Клубра 280 çын вырнаçмалăх зал, вулав çурчĕ тата лаборатори, колхоз правленийĕ çурчĕ пулмалла. Колхоз клуб тума 142 пин тенкĕ уйăса пĕтернĕ. Анчах клуб туса пĕтерме вĕсен вăй çитеймен, ялхуçалăх банкĕ ссуда паман. Хăйсен депутачĕ патне çыру çырса янă.

Депутат пулăшнипе СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата СССР Ялхуçалăх банкĕ колхоза ссуда параççĕ. Сталинла Конституци 4 çул тултарнă кун колхозниксен пухăвĕ çĕнĕ, пысăк та илемлĕ клубра пулнă.

Çак колхозрах двигатель пур, анчах районри организацисем колхоза нефть паман, çавăнпа та вара арман та ĕçлемесĕрех ларнă. Петр Иванович Пумпур колхоза нефть памалла тунă. Колхозниксем депутат патне пысăк хаçăлăпа çыру çырса янă.

Пумпур юлташ хаçатсенче МТС машинисене тирпейлĕ усрасси çинчен çĕрре çеç мар сырнă. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ депутат статьисене сӳтсе-явса, машинăсене тирпейлĕ тыткалама пуçланă. Депутат çирĕплетсе ответ панă.

Халĕ Вăрнарта машинăсене тирпейлĕ тыткалаççĕ, МТС тата лайăх ĕçлеме пуçланă. Кăçал МТС çулталăк планне срокчен тултарчĕ, тракторсене те юсама пĕтереççĕ ĕнтĕ.

Калининский районри Сăкăт тавралăнчи колхозсем Çавал çинче пысăк гидроэлектростанци тума пуçланă. Анчах ĕç ăнса пыман, ĕç вăйĕ çителĕкле паман, гидростанци тăвас ĕç вăрăма кайнă. Петр Иванович Пумпура унăн колхозниксем тĕплĕн çырса илтернĕ, пĕтĕм чăрмавсем çинчен каласа панă. Петр Иванович Пумпур кăлăл строительствăна хăй кайса пăхнă. Çитменлĕхсене палăртнă, çавăнтах пулăшу та панă. Халĕ строительство ĕçĕ аванланнă, килес çул 6 колхозра электричество йăлтăртатса çутăлма пуçлать.

Депутат суйлавçăсенчен харпăр-хăй ыйтăвĕсем çинчен çырса пĕлтерекен çырусем те нумай илет. Çак çырусем вĕсем — чĕрĕ çынсен çырăвĕсем, вĕсен хыçĕнче чĕрĕ çынсем тăраççĕ. Депутат çавăнпа та кашни çырăвах тĕплĕн вулать, кирлĕ пек пулăшу парать.

Элĕк районĕнчи Хурасанти суйлавçă Федорова юлташ Кисловодскри санаторинчен ăмăй кăмăллă çыру çырать.

«Эсир тăрăшнипе ЧАССР Наркомсобесĕ мана курорта кайма путевка пачĕ. Халĕ эпĕ Кисловодскинче сывалатăп. Сире пирĕншĕн тăрăшнăшăн чĕререн тав тăватăп».

Льговран красноармеец Александров юлташ депутат патне çырнă çырура çапла каланă:

«Эсир пулăшнипе пирĕн çемьене колхоз правленийĕ кирлĕ таран пулăшу панă. Эпĕ Сире пысăк спасибо калатăп. Çавнашкалах манăн çемье те Сире саламлать. Эсир пирĕншĕн Сталинла тăрăшатăр».

Депутат П. И. Пумпур юлташ хăй патне пыракан çырусене пĕрне те ответ памасăр хăварман, пурне те кирлĕ пек пулăшнă.

1940 çулти май уйăхĕнче депутат Çĕмĕрлерен çамрăк комсомолец Володя Александровран çыру илнĕ. Çамрăк патриот Сывлăш-çар Флотне службăна кайма ĕмĕтленет, анчах вăл хăйне килес марришĕн хăрать. «Мана Хĕрлĕ Çара илсен, — çырать вăл, — эпĕ Сире отлично çеç вĕренме сăмах парăп. Эпĕ хамăн ĕçе лайăх пĕлсе, ирек хăçан та тăшмана сирĕн пекех хăюллăн, паттăрлăн çĕмĕрме хатĕрлĕ тăрăп.

Эпĕ летчик пулатăпах, пирĕн çĕр пывра кам мĕн пуласшăн, çавă пулать те. Пирĕн çĕршывра çеç этем хаклă, унăн пурнăçĕ чаплă».

Калининский районри сывлăх пайĕнчи работницăсем Антонина Сергеева, Ольга Александрова хăйсене Хĕрлĕ Çара илме ыйтаççĕ. «Эпир Хĕрлĕ Çара кайса специалистсем пуласшăн, эпир медицина техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Эпир çар шкулĕнче вĕренме те хатĕр. Эпир Калининский райвоенкоматне заявленисем çыртăмăр, анчах пире нимĕнле ответ та памарĕç.

Эпир пирĕн ĕмĕте пурнăçлас ĕçре Сирĕнтен пулăшу ыйтатпăр. Хĕрлĕ çар воинĕсем пуласшăн, пĕтĕм вăя, тĕлĕве тăван çĕршыва сыхлама парассшăн».

Пĕррехинче ăна Вăрнар пионерĕсем çапла каланă:

— Эпир халĕ пионерсем çеç-ха. Халĕ эпир отлично вĕренетпĕр. Уссе çитсен Хĕрлĕ Çара каятпăр. Халĕ эпир геройсем мар, анчах сирĕн пекех геройсем пулатпăр.

Чăнах та: вĕсем геройсем пулĕç те, вĕсен çулĕсем аслă, такăр. Совет халăхĕн шанчăклă геройĕн Петр Ивановичăн паттăрла ĕçĕсем ваттисене те, çамрăксене те хавхалантараççĕ, савăнтараççĕ.

Депутат почти — питĕ интереслă. Кашни çырăвах пирĕн çĕршывăн чапĕ çинчен, илемĕ çинчен калать.

ЕВГЕНИЙ ЕНИ.

Чăваш АСС Республикинчи МТ Станцисем 1940 çулти V-мĕш кварталта тракторсене юсас плана мĕнле тултарнине кăтартакан СВОДКА

(1940 ç. декабрĕн 31-мĕшне, процентпа)

МТС ячĕсем	Капитальн. ремонт	Текущий ремонт
Улатăр	40	13,3
Элĕк	—	42,8
Вăрнар	112,5	111,7
Йĕпреç	100	100
Ишлей	20	20
Канаш	50	75
Куславкка	112,5	100
Комсомольский	20	70
Хĕрлĕ Чутай	—	112,5
Красноармейский	14,2	100
Кувакино	80	93,7
Сĕнтĕрвăрри	22,2	71,4
Первомайский	—	—
Пăрачкав	55,5	90,9
Сĕнтĕр	22,2	71,4
Вăрмар	36,3	18,7
Çĕрпӳ	37,6	44,4
Шупашкар	37,5	54,5
Чкаловский	—	14,3
Шăмăршă	66,6	118,1
Шăхасан	100	125
Çĕмĕрле	33,3	70
Етĕрне	25	20
Елчĕк	—	111,7
Тăвай	—	35,7
Республикипе	42,2	70,3

Трактороссене вăхăтра юсамалла

Çĕрпӳ МТ Станцийĕнчи Черняев юлташ бригадин «СТЗ» трактороссене 3 трактор юсамалла пулнă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче бригада хăйĕн тракторĕсене юсаса пĕтерчĕ. Механиксем трактороссене лайăх юсанă тесе йышăннă. Çапла ĕнтĕ Черняев юлташ бригадир ĕçре те малта пырать. Кунтă трактористсем иртнĕ сезонра 194 гектар сухаламалла пулнă пулсан 2960 гектар сухаланă.

Малта пыракан трактористсем тата механиксемпе слесарьсем трактороссене пахалăхлă юсама сĕнӳсем парассĕ. Подшипниксене Корба системийĕпе уламăртарса çĕнетме тытăннă. Çакна туса слесарьсем хăйсемех станок тунă. Подшипниксене кун пек урăхлатни тухăçлăрах ĕçлеме май паратъ. Подшипниксем ирĕлсе каймаççĕ. Пысăк шестернене те мастерскойĕнче туса хатĕрлеççĕ.

Анчах та малта пыракан бригадăсен тата уйрăм трактористсен пахă опычĕсене пур çĕре те куçарса пымаççĕ-ха. Çакна пула ĕнтĕ, пĕтĕмĕшне илсен, тракторсене юсасси кирлĕ пек пымасть. 6 бригадăн декабрь уйăхĕнче 23 трактор юсаса кăлармалла пулнă, паянхи куна çитсе 11 трактор çеç юсанă. Уйрăм бригадăсенче ĕç пахалăхĕшĕн çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Федоров бригадинчи 7-мĕш номерлĕ тракторăн подпятникĕн болтинчи вырнаçтарса лартман. Кубанский бригадинчи «ЧТЗ» трактор гусеницин башмакне кирлĕ пек вырнаçтарса лартман. МТС директорĕ çак çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăварнă, трактороссене йышăнман.

Дирекци кирлĕ материалсене вăхăтра кӳрсе килмен. Сăмахран, бабичăккине пула 12 трактор вăхăтра ремонтран тухмасăр тăнă. Техникăн вĕренмелли кружок занятийĕсем пурте иккĕ çеç пулнă.

Трактористсем лайăх ĕçлеччĕр тесен, вĕсене кирлĕ условисем туса панă малла. Анчах та кунта çакăншăн тăрăшмаççĕ-ха. Горпо декабрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр столовăй уçăлнă пулнă. Столовăйне паян куна çитсе тăм уçман.

(Хамăр корр.).

Колхозăн çитĕнĕвĕсем

ЕЛЧĔК. Аслă Пăлатимĕш ялĕнче Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Евдокия Павловăн 9 ача. Вăл ачасемшĕн государствăран кашни çулах 6 пин тенкĕ пособи илсе тăрать.

Пособи укçипе ачисене лайăх пăхать. Тăхăнмалли тумтирсем, вĕренмелли хатĕрсем çителĕклĕ илсе панă. Пăлова ачисене шкулта вĕренме пулăшма пырать.

М. Орлов.

Колхозăн çитĕнĕвĕсем

ЕЛЧĔК. Аслă Пăлатимĕш ялĕнче Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Евдокия Павловăн 9 ача. Вăл ачасемшĕн государствăран кашни çулах 6 пин тенкĕ пособи илсе тăрать.

Пособи укçипе ачисене лайăх пăхать. Тăхăнмалли тумтирсем, вĕренмелли хатĕрсем çителĕклĕ илсе панă. Пăлова ачисене шкулта вĕренме пулăшма пырать.

М. Орлов.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

Юрату ыйтăвĕ чăваш прозинче

Юлашки çулсенче пирĕн чăваш совет писательсем хăйсен произведенийĕсенче юрату ыйтăвĕсене анлăн çутатса пама тытăнчĕç. Калас пулать, пирĕн писательсем ку енĕпе лайăх произведенисемех пачĕç. Сăмахран, Илья Тукташăн «Шурă роза» тата «Пурнăç пуçламĕшĕ», М. Кибекĕн «Лейтенант ывăлĕ», Ф. Уярăн «Преми» тата ытти хăшпĕр писательсен произведенийĕсене асăнма пулать. Вăл произведенисенче эпир çамрăксен тулли те хаваслă пурнăçне, вĕсен пысăк туйăмĕсемпе вĕри юратăвĕсене, пирĕн çамрăксем пултаруллă та тĕлĕнмелле паттăр ĕçсем, мухтава тивĕçлĕ ĕçсем тума пултарнине куратпăр. Анчах хăшпĕр авторсем юрату ыйтăвĕсене, пирĕн çамрăксем çинчен çырнă чухне, арпаштарса тĕрĕс мар çырни те пулкалать. Тепĕр чухне тата пирĕн çамрăксем çинчен элеклесе, хура сăрпа сăрласа çырнă произведенисене те курма пулать.

Çак çулхине çамрăк автор А. Лазарева çырнă «Пирвайхи юрату» ятлă калав «Сунталăн» 2-мĕш номерĕнче тата чăваш прозин антологийĕнче пичетленсе тухрĕ. Хăшпĕрисем çак калава мухтама та пикенчĕç. Теприсем тата А. Лазарева пирĕн прозăна хальччен никам çырман çĕнĕ япала илсе килчĕ, теме те хăюллăх çитерчĕç. Чăнах та, калавăн ятне вуласанах, ку произведенире пирвайхи юрату çинчен вулатăп, тесе ĕмĕтленетĕн. Анчах калава вулама тытăнсанах, санăн ĕмĕтсем татăлаççĕ. Кăмăлсăр пулатăн. Авторĕ çине те, редакторĕсем çине те тарăхатăн. Мĕскер çинчен çырнă-ха А. Лазарева хăйĕн «Пирвайхи юрату» ятлă калавĕнче? Çырма пултарнă-и-ха вăл пирвайхи юрату çинчен? Автор хăй умне пысăк задача лартнă, анчах ăна вăл çĕнтерсе илеймен. Автор Капа ячĕпе (калаври тĕп герой) пĕр вĕçĕмсĕр «пирвайхи юратупа юрататăп» тесе çырнă пулсан та, пирвайхи юратăва кăтартса парайман.

Тĕп герой Капа хăй тахçан юратнă Леня летчик патне çыру çырать. «Пĕлместĕп, темле, те ăнланăн эс мана? Анчах, мĕн ыйтса тăратăп-ха эпĕ? Пурĕпĕрех мар-и мĕн... Çаплах çав, Леня, маншăн пулсан, пурĕпĕрех! Хам ĕмĕрĕмре эпĕ пĕрремĕш хут ăрасна çынна тĕл пултăм. Ытти çынсем пек пулмарĕ вăл маншăн, ытти çынсенчен ăраснах уйăрăлса тăракан çын пулчĕ. Вăл çын, те ĕмĕрлĕхех, кун пирки татса калаймăп, ман чĕрене кĕрсе вырнаçрĕ». Çакăн пек пуçлать Капа хăйĕн çырăвне. Чăнах та, çак малтанхи йĕркесене вуласан, пирĕн умма тĕлĕнмелле çамрăксен пурнăçĕ, вĕсен вĕри те татăлми юратăвĕ, пысăк туйăмĕсем тухса тăмалла пек. Анчах калава вуласа пĕтерсен, çак çырăвăн пуçламĕшне тепĕр хут аса илетĕн те, санăн умма пирвайхи юратупа çунакан хĕр мар, хăйне юратман çын хыççăн кĕвĕçсе çӳрекен хĕрарăмăн образĕ тухса тăрать. Капа çыруне ĕненес пулсан, уншăн Леня хăй ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут тĕл пулнă ăрасна çын, вăл пурин-чен те ăраснах палăрса тăрать. çавăнпа та Леня ун чĕрине ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçнă. Мĕншĕн-ха çавăн пек пулнă? Е Леня пысăк туйăмлă çын-и, е вăл паттăр ĕçсем туса хăйне мухтава кăларать-и? Çак енсем вара унăн пачах та çук. Вăл Галя тата Женя хĕрарăмсемпе çӳрет. Чуптăваççĕ, çĕрĕ-çĕрĕпе таçта çухалса çӳреççĕ, анчах Женяпа Галя Леняна юратмаççĕ, тунсăхлă сирес шутпа кăна çӳреççĕ, часах пĕр-пĕрне йăлăхтарса çитереççĕ, вара ним пулман пекех уйăралаççĕ. Леня уншăн çунакан Капăна юратмасть, юратма мар, Капăпа юлташла та каламасть. Анчах Капа çакна кура тăрах, Леня летчикшăн çунать, вăл ытти хĕрарăмсемпе çӳренине курса кĕвĕçет. Леня ытти хĕрарăмсемпе çӳреме пăрахсанах, Капа тем пекех хĕпĕртесе ӳкет. Мĕншĕн-ха Капа Леняна çавтарнех юратса пăрахнă? Чипер кĕлеткишĕн, сарăрах çӳçĕшĕн тата шупкарах кăвак куçĕшĕн. Акă мĕнре пулнă пĕтĕм юратăвăн тупсăмĕ!

Тата тепĕр тĕслĕх. Капа Шупашкара отпуска тавăрăнать. Кунта вăл аэроклубра ĕçлекен Арçукпа паллашать. Пĕрпĕрне юратаççĕ те чуптуса çӳреççĕ. Çакăн хыççăн Капа Леняна «пирвайхи юратупа юрататăп» тет. Пит те тĕлĕнмелле. Мĕнле-ха вăл, хĕр тенĕскер, хăйĕн юрату туйăмĕсем çирĕпленмесĕрех, ăнсăртран тĕл пулнă Арçукпа чуптуса çӳретĕр? Паллах, пирвайхи юратупа çунакан хĕр çаван пек пулма пултарайматъ.

Ак Капăпа Сашка Ткачев аллаллăн тытăнса утса пыраççĕ. Сашка Ткачевăн Капăна юратас кăмăл та пур, вăл уншăн çунма та пултарать, анчах Капа ăна, хăйне юратма пулăнă Сашка уншăн нимех те мар. Анчах Леня летчик ун вырăнĕнче пулнă пулсан, вăл пуçне çухатсах кулянмалла мĕн. Мĕншĕн? Чăвашсен авала юлнă йăлипе Капăна Леня çумне «пуç çавăрса» яман пуль-çке?

Илер-хе тата Галяпа Женяна. Камсем вĕсем? Вĕсем иккĕшĕ те хăйсен упăшкисенчен йăлăхса çитнĕ хĕрарăмсем. Вĕсем иккĕшĕ те Леняпа çӳрекелеççĕ те: «йăлăхтарчĕ, сивĕтĕмĕр эпир пĕр-пĕринчен» теççĕ. Юратăва çакăн пек ăнланни пысăк йăнăш туни пулать.

Пирĕн летчиксем пĕтĕм тĕнчери рекордсене хăйсен аллипе илчĕç Пирĕн летчиксем А. Лазерева çырнă «Пирвайхи юрату» ятлă калаври летчиксем мар. Пирĕн летчиксем пысăк туслăхлă, пысăк чунлă тата вĕри юратупа çунакан летчиксем. Вĕсем хăйсен юратăвне туртса илме пикенекен тăшмансемпе хаярран вăрçса, вĕсене ĕмĕр асăнмаллăх çапрĕç. А. Лазарева çырнă «Пирвайхи юрату» калав пирĕн летчиксене хура сăрпа сăрласа кăтартать.

***

Митта Петĕрĕ «Сунталăн» 3-мĕш номерĕнче «Пăр» ятлă калав пичетлесе кăларчĕ. Хулара ĕçлекен Арçук (паллах, совет ĕçне, парти ĕçне тăваканскер) ялтан яла командировкăна çӳрет. Вăл колхозра çамрăксем хушшинче сахал мар хĕрӳллĕ сăмахсем калать. Çапла вăл колхозра хăйне хисеплекенсене нумаях тупать. Калас пулать, вăл ыр ĕç тăвакан çынах. Анчах йăла тĕлĕшĕнчен вăл ытла та пăсăлнă çын иккен. Хăйĕн арăмĕ, ачи-пăчисем пур пулин те, вăл кашни колхозрах ĕçре палăрнă стахановка-хĕрсене хăй енне çавăрма тăрăшать. Вăл вĕсене улталас шутпа хăйне Дон-Жуан пекех тыткалать. Унăн пĕр хĕр патĕнче ĕç тухмасанах, тепĕр колхоза, урăх хĕр патне каять.

Анчах Митта Петĕрĕ çак йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă Арçука епле питлет-ха? Акă хĕрсем хулана пыраççĕ те (Арçук хваттерĕнче икĕ хĕр пулаççĕ) Арçукăн арăмĕ пурринне, вăл ача-пăчаллă пулнине пĕлеççĕ. Çапах та вĕсем Арçукăн япăх ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе ним те тумаççĕ.

«Пăр» калава çыракан Митта Петĕрĕнчен çакна ыйтас килет: пирĕн совет тата парти ĕçне тăваканскер хушшинче Арçук пек çынсем нумайши? Паллах, вĕсем çук мар, пур. Калăпăр: çĕр çынтан пĕр çын пулма пултарĕ. Апла пулсан вăл çын пирĕн пурнăçшăн характерлă мар. Çавăнпа Митта Петĕрĕн калавĕ те пурнăçран аякра тăрать.

Юлашкинчен çакна калас пулать. Чăваш Совет писателĕсен хăйсен произведенийĕсене çырнă чухне, вăл произведенисене ĕçхалăхĕ чăнласах юратса вулатăр тесен, юрату ыйтăвне çулĕ вырăна лартмалла. Мĕншĕн тесен лайăх та паттăр ĕçсене пысăк чунлă та вĕри юратупа çунакан çынсем кăна тума пултараççĕ. Ун пек çынсем пулма пирĕн аслă та ирĕк çĕршывра пур условисем те пур. Çавăн пек паха енсене кăтартса çырнă произведенисене кăна халăх юратса вулĕ, вĕсенче хăйĕн юратнă геройĕсене тупĕ.

Ал. МЕДВЕДЕВ.

Ултă пин тенкĕ пособи илет

ОКТЯБРЬСКОЕ. Энĕш-Кăршкари Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕ Евдокия Павловăн 9 ача. Вăл ачасемшĕн государствăран кашни çулах 6 пин тенкĕ пособи илсе тăрать.

Пособи укçипе ачисене лайăх пăхать. Тăхăнмалли тумтирсем, вĕренмелли хатĕрсем çителĕклĕ илсе панă. Пăлова ачисене шкулта вĕренме пулăшма пырать.

М. Орлов.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: январĕн 3-мĕшĕнче Германи авиацийĕ Англин хĕвелтухăç сыранĕнче тĕрлĕрен объектсене атакăланă. Сторожевой пĕр судна путарнă.

Январĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕн пысăк соединенийĕ, Англи самолечĕсем Бремен çине бомбăсем пăрахнине хирĕç ответлесе, Кардифф порчĕпе хули çине пырса тапаннă. Бомбăсем пăрахнипе тухнă пушарсене 100 километр аякран курма пулнă.

Англи самолечĕсем Сурçĕр Германире халăхсем йышлăн пурăнакан икĕ пункт çине бомбăсем пăрахнă. Пурăнмалли темиçе çурта çĕмĕрсе тăкнă. Хăшпĕр складсенче тата фабрикăсенче пушарсем тухнă, вĕсене сийĕнчех сӳнтернĕ. Пушарсем промышленность учредприятийĕсемпе çар объекчĕсене ĕмĕн туман. Бомбăсем пăрахсан 8 сын çĕлĕ

Ял

вилнĕ тата 20 çын аманнă. Англин 2 самолетне персе антарнă. Германин пĕр самолечĕ ним хыпарсăр пĕтнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, енер кăнтăрла Германи самолечĕсем Кент графствинчи пĕр хула çине пырса бомбăсем пăрахнă. Материальнăй сиен пысăк мар, çавăн пекех çынсем хушшинче те вилнисемпе аманнисем нумай мар. Англин хĕвеланăç пайĕнчи пĕр хулара темиçе çын вилнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле кăнтăр Уэльсри пĕр хула çине бомбăсем пит вăйлăн пăрахнă. Англин ытти пайĕсем çине ун пекех вăйлăн пырса тапăнман. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем йышлах мар. Çавăн пекех сиен те пысăк мар. Кунсăр пуçне, противник самолечĕсем Лондон çине те пырса тапаннă.

Германи çарĕн верховнăй командованийĕ 1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнчи вăрçă ĕçĕсем çинчен тунă доклад

БЕРЛИН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). ерманири информаци бюровĕ Германи рĕн верховнăй командованийĕ 1940 лăн иккĕмĕш çурçулĕнчи вăрçă ĕçĕм çинчен тунă доклада парать. Докдра çапла каланă: Франципе перемтунă хыççăн, Англие хирĕç кĕрешкĕн хатĕрленме пуçланă. Нордкапи Испани чикки патне çити сарăлса ртакан çыранри шывсене тасатас та сыхлас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туирттернĕ хыççăн, Германин çăмăлшши çар карапĕсем çийĕнчех çапăва кĕнĕ. Тинĕс-çар вăйĕсене океан ывĕсем çинче çапăçăва кĕртни уйрăнах ăнăçлă пулнă. Германин тинĕс-çар флочĕ авиацине сыхăнса кĕрешсе, англи тинĕс-çар флочĕн чылаях нумай карапĕсене пĕтернĕ. 1940 çулăн иккĕш çурçулĕнче Германин тинĕс-çар флочĕ противникăне 12 эсминец, 8 дводнăй лодка, 9 крейсер, 3 канонерка тата 63 пĕчĕк карап путарнă. Çак вăхăт хушшинчех Германи авиацийĕ англи çар карапĕсене 32 карап путарнă. 1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче путарнă çак çар карапĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ—190 пин тонна. Германи тинĕс-çар флочĕ Англин сутӳ флочĕнне 3.200 пин регистровăй брутто-тонна путарнă, Германи авиаци—700 пин регистровăй брутто-тонна ытла путарнă. Пĕрле илсе шутласан вăл 3 миллион та 900 пин регистровăй брутто-тонна пулать. Кунсăр пуçне, противникăн сутӳ-илӳ тумалли 264 суднине сиен кӳнĕ, вĕсен пĕтĕм тоннажĕ—2 миллион регистровăй брутто-тонна ытла.

Иртнĕ çулти июнĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа Германин 3 миноносец, 5 миннăй гральщик, 8 подводнăй лодка, 12 пĕчĕк судно пĕтнĕ.

Франципи поход пĕтнĕ хыççăн, Германи авиацийĕ Британи утравĕсене хирĕç наступлени пуçланă. Июнĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа противник самолечĕсем Германи самолечĕсенчен виçĕ хут нумайрах пĕтнĕ. Октябрĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Англи çине пырапыра тапăнас ĕçе Итали авиацийĕн отрячĕсем те хутшăннă. Августăн 8-мĕшĕнчен пуçласа Германи авиацийĕ Англи çине 2000 хут пырса тапăннă, фугаслă бомбăсем 43 миллион килограмм ытла, вут чĕртсе яракан бомбăсем 1 миллион та 600 пин килограмм ытла пăрахнă. Çак вăхăт хушшинче противник пăрахнă бомбăсен хисепĕ 25 хут пĕчĕкрех. Германин çар объекчĕсемпе çар-хуçалăх объекчĕсене кӳнĕ сиен пысăк мар. Германипе Италин вăрçă ĕçĕсене, тенĕ докладра, йăлтах пĕр-пĕринпе килĕштерсе туса пыраççĕ.

Бремен çине пырса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем январĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Бремен çине пырса тапаннă. Бомбăсем пуринчен ытларах пысăк верфьсем çине пăрахнă, вăл верфьсенче çар карапĕсем, çăмăнах подводнăй лодкăсем йышăнăва тăваççĕ. Кунсăр пуçне, нефтехранилищесем, чугунçул линийĕсем тата Фокке-Вульфри авиаци завочĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Верфьсенче пысăк пушар тухнă, заводра ултă хутчен взрыв пулнă. Нефтехранилищесене, чугунçул линийĕсене тата тĕрлĕрен промышленность предприятийĕсене вăйлăн çĕмĕрнĕ.

Эмден çине пурĕ 29 хутчен пырса тапаннă. Эмден — Германин тинĕс-çар бази.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

ОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). гер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сурăран сурçĕр еннелле грексем ĕçе яла туртса илнĕ. Вĕсене хирĕç ьянецсем çине тăрса çапăçаççĕ. рĕр тата центральнăй фронтсенче, кополепе Лин хушшинче, итальен атакисене сирсе янă. Лин хуен кăнтăр еннелле Охрид кӳлли инче итальянецсем Пишкопада са илнĕ пулнă, анчах вĕсене унчасах хăваласа кăларнă. Центральфронтра, Москополерен сурçĕр , Крушова—Тресова линийĕ çинче ьянецсем грексен вăйлă укрепленийĕ позицийĕсене атакăланă. Сине çапăçнă хыççăн грексем итальен атакине вăйсăрлатнă. Çак сек грексене чылаях пысăк сухатукӳнĕ.

ЬЮ-ЙОРК, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). айтед пресс агентстви çапла пĕлт: тĕрĕслесе пăхман сведенисем ăх. Эльбасанран кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле 5 миляра Мурикани тăвĕ çинче грексем артиллери вырнаçтарса лартнă, хула çине пеме пуçланă.

Сыранри сектортă, Химара хулинчен сурçĕр еннелле 8 миляра, итальянецсене поражени кӳнĕ. Итальянецсен вилнисемпе аманнисем 200 çын шутлаççĕ. Италинне 450 çын ытла тытăнă. Итали войскисем сыранри сул тăрăх Валона еннелле чакса пыраççĕ. Грексем вĕсене Керавния тăвĕсем урлă хăваласа пыраççĕ. Клисура районĕнче наступлени туса пыракан грексем çĕнĕ пунктсене туртса илнĕ. Икĕ йывăр оруди тата вăрçă материалĕсем нумай туртса илнĕ. Ассошиэйтед пресс агентстви Албанири корреспонденчĕпе каласнă чухне Америка сăнавçи майор Кроу çапла каланă: кăнтăр фронтĕнче пур çĕрте те пуçару грексен аллинче, анчах та грексен самолетсем, грузовиксем тата лашасем çителĕксĕр.

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). лин типсĕр çинчи вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Италин Барта гарнизонĕ активлăх кăтартмасть, вăл Англи войскисене хатĕрленмай парать. Ытти фронтсенче ниле улшăну та пулман. Сиди-Баррайонĕнче наступлени туса пынă не тата малашнехи операцисенче тивникăнне 329 оруди туртса илнĕ.

ИМ, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Стеи агентстви Джарабуб патĕнче нă çапăçусем çинчен тĕплĕн пĕлт.

екабрĕн 24-мĕшĕнче противникăн анизированнăй чăсĕсем Мельфа таĕн Гсетайа патĕнчи постсене атанă. Анчах атакăна сирсе пăрахнă. екабрĕн 25-мĕшĕнче противник пуен ытларах Гарет Баруд посчĕ алле (Джарабубран 6 километр сурен еннелле) наступлени туса пынă. Итали гарнизонĕ çав атакăна сирсе пăрахнă, вăл противника пысăк сухатусем кӳнĕ. Ливири моторизованнăй чăсĕн патрулĕсем противника хыçран хĕстерсе пынă, вĕсем противникăн нумай сыннисене тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсем те нумай туртса илнĕ.

Декабрĕн 26-мĕшĕнче Англи войскисем Эн Гсетайа постне çĕнĕрен атакăланă. Итали гарнизонĕ противника вăйлăн хирĕç тăнă, анчах гарнизон урăх форт, Джарабубран кăнтăр-хĕвелтухăç еннелли форт патнелле йĕркеллĕнех чакнă. Пирĕн моторизованнăй колоннăсенчен пĕри, çапăçу пынă çĕре пырса çитме ĕлкĕрнĕскер, противникăн атакине сирсе пăрахнă.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче противник Гарет Баруд çине каллех пырса тапăннă, анчах ку расра унăн каялла пăрахса тармалла пулнă, çапăçу пулнă çĕрте унăн вут хыпса илнĕ бронемашинисем тăрса юлнă.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

ИМ, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). Итали андованийĕ «пĕлтернĕ тăрăх, Киреси чиккинче Итали артиллерийĕ тивникăн мотомехчăсĕсемпе çар каĕсем çине пенĕ. Итали самолечĕсем тивникăн малти пĕр бази тата тихĕррипче Англи карапĕсем çине Ăсем пăрахнă. Ытти самолетсем ди фронтĕнче тата пушхирте Ан механизированнăй чăсĕсем çине Ăсем пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Самолетсем хаялла пурте тĕрĕсех тавăрăннă.

Греци фронтĕнче противник атакисене сирсе пăрахнă. Итали войскисем контратака туса, противник войскисене каялла хăваласа янă. Противникăн салтакĕсене тыткăна илнĕ. Противник самолечĕсем Эльбасан çине бомбăсем пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

Италири хаçатсем Рузвельт сăмахĕ пирки мĕн çыраççĕ

РИМ, январĕн 1-мĕш. (ТАСС). «Джоналĕ д'Италиа» хаçат декабрĕн 31-мĕшĕнче Гайда алă пусса кăларнă умстатьяра çапла çырать: Рузвельтăн юлашки сăмахĕнче çĕнни нимĕн те çук.

«Рузвельт, — тесе çырать Гайда, — Англи майлă пулса тĕнĕл держависемпе Японне хирĕç вăрçастăн тăрăшакан çын. Вăл вăрçă çинчен пĕлтермен, анчах вăл вăрçă пырать».

Рузвельт Англине вăрçă материалĕсем — суднăсенчен пуçласа броневиксемпе самолетсем таранах — ярас ĕçе вăйлатма пулнине палла туса, Гайда çапла çырать: «халиччен тĕнĕл держависем питĕ чăтăмлă пулчĕç, анчах вĕсен чăтăмлăхĕн те вĕçĕ пур.

Америка пулăшу пани контроблокада линине Америка флагĕ пулăшнипе пăсма хăтланни, Германипе Италин Америка порчĕсенчи суднисене тăшман аллине пани вăл — Америка нейтралитетне уççăнах пăсни пулĕччĕ. Çакă вăл США уççăнах вăрçа хутшăннине пĕлтерĕччĕ».

Рузвельт «США-па Хĕвеланăç полушарийĕшĕн тĕнĕл держависем енчен хăрушлăх пур» тесе каланă пирки Гайда çапла çырать: «тĕнĕл держависен вăрçинче Европăра тата Европăри державӑсен колонийĕсенче уççăнах палăртса хунă чикĕсемпе тĕллевсем пур».

«Реджиме фашиста» хаçат декабрĕн 31-мĕшĕнче Рузвельт сăмахĕ пирки çапла çырать: «Хăшпĕр вăхăтран пуçласа США Германипе Италине хирĕç татăклăнах кĕрешекен тăшман вырăнĕнче шутланма пултарать».

«Çак вăрçă тĕнчери плутократин пĕтĕм вăйĕсем пĕр фронта пухăнса тăни çеç пулса тăрать», тесе кăтартса парса, хаçат çапла çырать: «пĕтĕмĕшле тăшмана пĕтерсе тăкас ĕç валли мĕнпур пролетарилле халăхсен пĕрлĕхлĕ фронтне туса хурас пулать».

Декабрĕн 31-мĕшĕнче «Стампа» хаçат Рузвельт сăмахĕ пирки пысăк статья çырса кăларнă. Хаçат çапла çырать:

«Рузвельтăн икĕ шухăшлă, уçă мар шухăшлă сăмахĕ пирки хамăр çавтери çилленсе тарăхни çинчен шарламасăр хăварма пултараймастпăр эпир. Демократиллĕ тӳрĕлĕхшĕн тăрăшакан çын, гуманизмпа тĕнчери право ячĕпе, тоталитарлă державăсене цивилизацирен кăларса пăрахасшăн. Гуманизмпа тата тĕнчери правăпа витĕнсе, плутократиллĕ империализм хăйĕн преступленийĕлле ĕçĕсене пытарса тăнă тата халĕ те пытарса тăрать».

Барди патĕнчи çапăçусем

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат çапла çырать: 15 кун хушши тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн Англи войскисем Бардине атакăлама пуçланă. Енер хула çине артиллерирен калама çук вăйлăн персе тăнă.

«Дейли геральд» хаçат çапла пĕлтерет: Италин Бардири гарнизонĕнче 20—30 пин çын шутланать, вĕсем — Сиди-Баррани патĕнче çĕмĕрсе тăкнă войскăсен юлашкисем. Барди йĕри-таврӑшĕнчи оборонăн вăйлă укрепленийĕ икĕ линине итальянецсем хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕш. (ТАСС) Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ каларнă коммюнике çапла каланă: паян ирхине ирех танксем пулăшнипе Австрали войскисем Барди оборонин пĕр секторне пырса кĕнĕ. Операцисем малаллах сарăлса пыраççĕ.

Салоники çине бомбăсем пырса пăрахни

СОФИЯ, январĕн 3-мĕш. (ТАСС). «Зора» хаçатăн Римри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Итали авиацийĕ Салоники çине хаярăн пырса тапаннă. Промышленноçлă предприятисемпе ытти объектсем çине нумай бомбăсем пăрахнă. Корреспондент çапла пĕлтерет: Германи авиацийĕн корпусĕ Италие пырса çитнĕ хыççăн вăхăтсенчех авиацин Грецине хирĕçле ĕçĕсем вăйланасса кĕтеççĕ.

Германи авиацийĕн отрячĕсем Италире

РИМ, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи авиацийĕн темиçе отрячĕ Италине вĕçсе пынă, çакна май Итали сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ генерал Приколо приказ пичетлесе каларнă. Приказра çапла каланă: Германи авиацийĕн корпусĕ Вăтаçĕр тинĕсĕн зонинче противник вăйĕсене хирĕç пыракан кĕртесси, конституцине ĕçе кĕртесси. Вăрçă условийĕсем, тенĕ Чан Кай-ши, çак задачăсене çăмăллăнрах пурнăçа кĕртме условисем туса параççĕ. Ăна тума вăрçă вăхăтĕнчи икĕ фактор пулăшать — пĕтĕм вăя хурса тăрăшни тата дисциплина.

Кирек мĕнле жертвăсем пулсан та, Китай валли ирĕклĕх çĕнтерсе иличчен пĕрмаях тăшмана хирĕç кĕрешес пулать. Çавăнпа та, тенĕ Чан Кай-ши, строительство мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илес пулать, вăрçă пынă вăхăтрах хамăрăн хăвата çулĕ пусăма хăпартас пулать, вăл хăват пире çĕнтерӳ кӳмелле таранах пысăк пулмалла.

Германири хаçат Англин тинĕс çинчи çухатăвĕсем çинчен

БЕРЛИН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Германири «Дейче Альгемейне цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа Англи тинĕс флочĕн 6 миллион брутто-регистровăй тонна пĕтнĕ. Англи адмиралтействин официальнăй даннăйĕсем çине кăтартса парса, хаçат çапла çырать: вăрçă пуçланнăранпа Англи тинĕс-çар флочĕн 1 линкор, 2 авианосец, 3 крейсер, 37 эсминец, 23 подводнăй лодка, 3 конвойнăй судно, минăллă 7 тральщик, пулăшакан 14 крейсер, пулă тытмалли, хĕçпăшаллантарнă 87 судно, хуралра тăракан 4 судно тата тĕрлĕ йышши пулăшуллă 24 судно пĕтнĕ.

Темĕнле çĕршыв самолечĕсем Эйре çине пырса тапăннă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине 5 сехетре темĕнле çĕршыв самолечĕсем Эйре çине пырса тапаннă, Дублинран 60 миляра сахалтан та 5 район çине бомбăсем пăрахса хăварнă. Килдер графствинчи çар штабĕ çине, Дублин хĕрринчи Теренюр, Боррис хули (Карлоу графстви), Дрохеда порчĕ (Ливерпуля вылăх-чĕрлĕх ăсатмалли тĕп порт) сывăхĕнчи Дулик пункчĕ çине тата Дрохедăпа Юлианстаун хушшинчи район çине бомбăсем пăрахнă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Дублинран кăнтăр-хĕвеланăç еннелле 60 миляра вырнаçса тăракан Боррис хулинче 3 çын вилнĕ, 2 çын аманнă.

Петэн выступленийĕ

КЛЕРМОН-ФЕРРАН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 31-мĕшĕнче каçхине Петэн радио тăрăх сăмах тухса каланă. 1941 çул йывăр çулталăк пулать, тенĕ Петэн, анчах та вăл «Франципе ура çине тăратмалли çулталăк» пулма тивĕçлĕ. Вăрçă тата блокада çĕршыв валли кирлĕ япаласем тăратас ĕçе йывăрлатаççĕ. Вăл французсене: апат-çимĕç запасне хăвăрах хатĕрлесе пыма ăс çитерĕр, тесе чĕннĕ. 1941 çул, тенĕ малалла Петэн, çине тăрса ĕçлемелли çулталăк пулмалла. Франципи хресченсен çĕртен вăл мĕн пама пултарнине йăлтах илес пулать. Рабочисен, тенĕ Петэн, шанчăка çухатмалла мар, анчах вĕсен пурнăçĕ йывăр пулĕ. Пирĕн чĕртавар запасĕсем пĕтсе килеççĕ... Пулма пултарать, хăшпĕр предприятисенчи ĕç йăлтах чарăнса ларĕ.

Чан Кай-ши сăмахĕ

ЧУНЦИН, январĕн 2-мĕш. (ТАСС). Сĕнĕ çул ячĕпе тата Китай республики 30 çул тултарнă ятпа радио тăрăх калани сăмахра Чан Кай-ши çапла калани: хăйĕн пурнăçĕн 31-мĕш çулĕнче Китай республикин тăшмана хирĕç çĕнĕ вăйпа кĕрешес пулать, строительство ĕçне туса пырас пулать. Вăрçă операцийĕсен итогĕсем, тенĕ вăл, тăшман планĕсем арканса кайнине кăтартса параççĕ. Тĕнчери лару-тăру Китая усă кӳмелле майлă лайăхланса пырать. Анчах та халăха асăрхаттарса хурас пулать: çак рăрçăра тăшман арканса каясси палла пулсан та, çĕнтерӳ тумашкăн нумай кĕрешме тивет-ха. Фронтсенчи кĕрешӳпе шалти строительство пĕр-пĕрина тачă сыхăнса тăраççĕ.

Наци оборонин экономики çинчен тăракан ыйту, тенĕ Чан Кай-ши, пысăк ыйту. Вăрçă вутĕнче экономика бази туса хурас, çар вăйĕсене çирĕплетес ĕçе çĕклесе ярас пулать. Кĕрешӳ тĕллевĕ — Сун Ят-сенăн виçĕ принципне пурнăçа кĕртесси, конституцине ĕçе кĕртесси. Вăрçă условийĕсем, тенĕ Чан Кай-ши, çак задачăсене çăмăллăнрах пурнăçа кĕртме условисем туса параççĕ. Ăна тума вăрçă вăхăтĕнчи икĕ фактор пулăшать — пĕтĕм вăя хурса тăрăшни тата дисциплина.

Кирек мĕнле жертвăсем пулсан та, Китай валли ирĕклĕх çĕнтерсе иличчен пĕрмаях тăшмана хирĕç кĕрешес пулать. Çавăнпа та, тенĕ Чан Кай-ши, строительство мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса илес пулать, вăрçă пынă вăхăтрах хамăрăн хăвата çулĕ пусăма хăпартас пулать, вăл хăват пире çĕнтерӳ кӳмелле таранах пысăк пулмалла.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Сурçĕр Китайра. Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче артиллери пулăшнипе декабрĕн 27-мĕшĕнче Китай пехоти японецсен Маоцзиндуран çурçĕр-хĕвелтухăç енчи позицийĕсене атакăланă. Çак районра Китай войскисем японецсене темиçе паха пунктран хĕссе кăларнă. Китайăн çак пайĕнчех декабрĕн 31-мĕшпе январĕн 1-мĕш хушшинче çĕрле Китай войскисем Ичэнран кăнтăр енче японецсене атакăланă. Китаецсемпе японецсем хушшинче вăйлă çапăçу сарăлса кайнă. Çавăн пекех Цзянсянь, Сясянь тата Вэньси районĕсенче те çапăçусем пыраççĕ.

Кăнтăр Китайра. Декабрĕн 25-мĕшĕнче Сучжоура (Шанхайран хĕвеланăç енче) Китай партизанĕсем японецсен амуници складне çĕмĕрсе тăкнă.

Январĕн 3-мĕш. (ТАСС).

Шупашкарти йĕлтĕрçĕсем кроса хатĕрленеççĕ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çамрăксем массăллă тренировкăра. Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрçĕсен виççĕмĕш кросĕ умĕн

Январĕн 5-мĕшĕнче профсоюзсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрçĕсен виççĕмĕш кросĕ пуçланать. Çĕршыври ялсемпе хуласенче физкультурниксен çак массăллă ăмăртăва пирвайхи хут хутшăнасшăн старта тухаççĕ.

Кроса пур рабочисемпе служащисем те, вĕсен çемьинчи çынсем те тата аслă шкулта вĕренекенсем те хутшăнма пултараççĕ. Ăмăрту программине Готов к труду и обороне СССР» тата «Будь годов к труду и обороне» значокĕсене илмелли комплексăн йĕлтĕрпе чупмалли дистанцине кĕртнĕ. Кросс январĕн 26-мĕшчен, студентсене валли—февралĕн 1-мĕшчен тăсăлать. Кăнтăрти районсенче, юр çуман вырăнсенче, йĕлтĕрçĕсен кросĕ вырăнне 10 километртан пуçласа 35 километр таран дистанцисене çуран утса тухмалли походсем пуласçĕ.

Пулас кроспа ĕççыннисем питех те интересленеççĕ. Мĕнпурĕ 84 спорт обществинчен 16 спорт обществисен данăйĕсем тăрăх, кроса 350 пин çын хутшăнма пулнă. Профсоюзсен Ленинградри физкультура организацийĕсем старта 120 пин çын, Харьковрисем—50 пин çын илсе тухма шутлаççĕ т. ыт. те. Пĕтĕмпе, малтанлăха кăна шутласа пăхнă даннăйсем тăрăх, кроса 700 пин çын хутшăнать. Иртнĕ çулта кроса 355 пин çын хутшăннă пулнă.

Вырăнсенче хатĕрленӳ вăйлăн сарăлса пырать. Пулас участниксем пур çĕрте те тенĕ пекех тренировка ирттереççĕ. Йĕлтĕрпе çӳрес ĕçе лайăх пĕлекен инструктор-общественниксем ертсе пынипе нумай çынсем йĕлтĕрпе çӳрес, сăрт-ту çине улăхса ярăнас ĕçе вĕренсе алла илеççĕ. Иваново облаçĕнчи «Основа» спорт обществин членĕсем 25 пин йĕлтĕрçĕ тренировка ирттереççĕ. Молотов хулинче те кроса хатĕрленес ĕç анлăн сарăлса кайнă, унта кроса яланах вунпăр пин çын хутшăнаççĕ.

(ТАСС).

Колхозсене кивçен укçа парасси ӳсет

Кăçал пĕрремĕш кварталта колхозсене кивçен укçа парса пулăшасси нумай ӳсет. Иртнĕ çулти пĕрремĕш кварталта Государство банкĕн Чăваш АССР отделенийĕ колхозсене кивçен пĕр миллион та 315 пин тенкĕ укçа панă пулсан, кăçал пĕрремĕш кварталта 2 миллион та 400 пин тенкĕ пама палăртнă.

Çак шутран колхозсенче вылăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерсе пыма 600 пин тенкĕ, çĕре çемçетмелли минерал çăмăхĕсем туянма 250 пин тенкĕ параççĕ.

Паха альбом

Çĕнĕ Пуянкассинчи туллимар ватăм шкули (Тăвай р.) учитель Е. Ефремов К. Иванов çырнă «Нарспи» поэма тăрăх питĕ те паха альбом тунă.

Альбомра «Нарспи» поэмăри геройсен пурнăçне тĕплĕн кăтартнă. Çавăн пекех альбомра поэмăри сăвăсем те нумай.

КĔСКЕН

Вылăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсем. Чăваш республикинчи Çĕрĕç халăх комиссариачĕ районсенче вылăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли 35 пункт организацилеме палăртнă. Çак пунктсем март уйăхĕнче ĕçлеме тытăнаççĕ.

Лаша фермисем. Çĕрпӳ районĕнчи колхозсенче çĕнĕрен 10 лаша ферми организацилеме. Районра лаша фермисем пурĕ 20 пулчĕç. Кунсăр пуçне районра лаша ĕрчетмелли 83 бригада организацилеме.

Пахча-çимĕçсем лартса тăвасси ӳсех пынă. 1941 çулта колхозсенче пахча-çимĕçсем лартса тăвасси нумай ӳсет. Иртнĕ çулта сĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсем 26700 гектар çинче лартса тунă. Кăçалхи çул пахча-çимĕçсене 31900 гектар çинче лартса тума пăхнă. Кăçалхи çул колхозсем пахча-çимĕçсене пысăк тухăçлă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Коллектив работников, первичная партийная и комсомольская организации Чувашского Областного комитета ВЛКСМ выражают глубокое соболезнование секретарю Чувашского Областного Комитета ВЛКСМ тов. Пароятникову Д. Т. по поводу преждевременной смерти его отца

ПАРОЯТНИКОВА ТАРАСА ГРИГОРЬЕВИЧА

последовавшей 3 января 1941 года в гор. Москве.

ЧУВАШСКИЙ КОЛХОЗНЫЙ
СЕЛЬХОЗТЕХ..ИКУМ ОБ'ЯВЛЯЕТ

дополнительный набор учащихся на подготовительное отделение.

На подготовительное отделение техникума принимаются председатели колхозов и сельсоветов, бригадиры, звеньевые, стахановцы колхозов, совхозов и МТС и др. в возрасте от 18 до 40 лет, имеющие общую подготовку в объеме 3-х классов начальной школы и выдержавшие приемные испытания по родному языку и арифметике.

Приемные испытания будут производиться с 15 по 20 января с. г.

Все желающие без особого вызова должны явиться на приемные испытания, имея при себе следующие документы:

1. Заявление. 2. Свидетельство о рождении. 3. Справку о состоянии здоровья. 4. Характеристику с последнего места работы.

По результатам приемных испытаний отличники учебы зачисляются на стипендию в размере 250 рублей в месяц.

Общежитием обеспечиваются все учащиеся.

Адрес техникума: г. Чебоксары, Аптечная 3. **ДИРЕКЦИЯ.**

ИТЛĔР!

ЧĂВАШСЕН РАДИО САРАКАН РВ—74 СТАНЦИЙĔ УРЛĂ 843 МЕТРЛĂ ХУМ ÇИНЧЕ

ШУПАШКАР КАЛАÇАТЬ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитетăн художествăллă вещани сĕкторĕ январĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа тунтикунсенче, юнкунсенче, эрнекунсенче кăссерен вырăнти вăхăтпа 7 сехет çурăра чăваш халăх поэчĕн Семен Васильевич Эльгерĕн „Шурăмпуç килсен" ятлă повеçне радиопа пама тытăнать.

Передачăсене итлесе пыни çинчен Чăваш радиокомитета çырса пĕлтерсе тăма пултапăр.

Чăвашрадиокомитетăн художествăллă вещанин секторĕ.

2—2

„ГЛАВКИНОПРОКАТĂН"
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОНТОРИ
РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЕ:

ЦЕНА ЖИЗНИ

ятлă, саслă, художествăллă çĕнĕ фильм кăларать!

Сценарий авторĕсем—**В. Скрипицын, А. Константинов.**
Режиссер—**Н. Тихонов.**
Композитор—**М. Спесобин.**
Юрăсен текстне çыраканĕсем—орденоносецсем **А. Барто, М. Исаковский.**

ПАЛЛĂРАХ РОЛЬСЕНЧЕ:

Летчик Бергенов—арт. **М. Милиев.**
Радистка Айна—арт. **Т. Кондракова.**
Доктор Ястребов—республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ орденоносец **И. Пельтцер.**
Софья Мередова—арт. **И. Иванова.**
Курбан Мередов—арт. **И. Клюквин.**
Г. В. Ф. начальникĕ—арт. **Н. Гладков.**

Ашхабад киностудийĕн производстви.
„Главкинопрокат" кăларнă.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн —97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2228.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 2, ф. б. 59×84 п. л.